# ВАÇЛЕЙ ДАВЫДОВ–АНАТРИ



Василий Иванович Давыдов–Анатри 1917 çулхи раштавăн 26–мĕшĕнче Чăваш Республикинче, Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç ялĕнче, вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. 1936 çулта хăйсен ялĕнчи çичĕ класлă шкултан вĕренсе тухсан, ВЛКСМ райкомĕ ăна республикăри хаçат шкулне пĕлӳ пухма ярать.

1940—1941 çулсенче чăваш каччи çар хĕсметĕнче тăрать. Сывлăхĕ начар пирки салтак пурнăçĕпе сывпуллашма, каялла тăван яла таврăнма тивет унăн. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вăл Первомайски районĕнчи «Коммунар» хаçат редакцийĕнче малтан яваплă секретарьте, унтан редакторта тимлет.

1945—1947 çулсенче Василий Иванович радио çуртĕнче литературăпа драма передачисен редакторĕнче вăй хурать. 1947—1948 çулсенче вăл — «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕн районта ĕçлекен корреспонденчĕ. Ун хыççăн каллех Радиоинформаци комитетне куçать, унта тĕп редактор ĕçне кӳлĕнет.

1949—1951 çулсенче сăвăç Шупашкарта учительсем хатĕрлекен институтра вĕренет. Пĕр хушă КПСС обкомĕнче пропагандăпа агитаци пайĕнче инструктор, кайран Чăваш кĕнеке издательствинче редактор, унтан Чăваш çыравçисен пĕрлешĕвĕ çумĕнчи илемлĕ литература пропагандăлакан бюро пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Хальхи вăхăтра Чăваш халăх поэчĕ литература ĕçĕпе кăна пурăнать.

Унăн чи пирвайхи сăвви 1936 çулта «Коммунар» хаçатра кун çути курнă. Тăван литературăра Ваçлей Давыдов–Анатри ытларах поэт–юрăçă ятпа паллă. Унăн сăввисемпе чăваш композиторĕсем чылай юрă çырнă. Сăмахран, «Тальянка» (Г. Лебедев кĕвви), «Сарпике» (К. Архипов кĕвви), «Тăванлăх юрри» (А. Никитин кĕвви), «Пире тăван кĕтсе тăрать» (Ю. Кудаков кĕвви) тата ыттисем те.

В. Давыдов–Анатри çырнă хайлавсенчен чи палли вăл — «Чеменпе Мерчен» поэма. Унта поэт чăваш халăхĕн иртнĕ кунçулĕнчи хĕн–хурлă та тертлĕ пурнăçне, вăл ирĕклĕхшĕн кĕрешнине сăнласа кăтартать. Тăван халăх сăмахлăхне анлăн усă курать çыравçă. «Поэмăна темиçе пĕчĕк пая пайланă пулин те, кашни пайĕ пĕр пĕтĕмĕшле илемлĕ хайлав... Поэмăра чăннипех те халăх чунĕ пурри палăрать, унăн тымарĕсем чăваш фольклорĕнчен вăй илни куçкĕретех; кĕвĕ–çемĕ сĕмĕ сăрхăннине, халăх каларăшĕсемпе сăмахĕсем янăраннине туятăн», — тесе каланă вырăссен паллă поэчĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ Сергей Наровчатов поэт. Асăннă поэма Чăваш АССРĕ 25 çул тултарнă тĕле иртгернĕ чи лайăх хайла[illegible]сен конкурсĕнче виççĕмĕш премие тивĕçет.

1950 çулта чăваш литературин Мускаври каçĕсене хастар хутшăннăшăн Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ В. Давыдов–Анатрие Хисеп грамотипе чысланă. Чăваш совет илемлĕ литературине аталантарас тата пропагандăлас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн 1967 çулта Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ поэта Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятне панă.

В. Давыдов–Анатри 1958 çултанпа — СССР писателĕсен Союзĕн членĕ. «Çилçунат» журналăн Трубина Мархви ячĕллĕ тата Патăрьел тăрăхĕнчи çамрăксен Митта Ваçлейĕ ячĕпе хисепленекен премисен лауреачĕ.

Поэтăн çакăн пек кĕнекесем тухнă: «Çамрăк ăру» (сăвăсем, 1951), «Пĕчĕк туссем» (ача–пăча сăввисем, 1956), «Ял çĕнелет» (очерк, 1956), «Пирĕн телей» (сăвăсем, 1957), «Чĕре хушнипе» (сăвăсем, 1957), «Чеменпе Мерчен» (поэма, 1959), «Ача–пăча сăввисем» (1960), «Эпир — пĕртăвансем» (ача–пăча калавĕсем, 1961), «Ытарма çук сире» (сăвăсемпе юрăсем, 1961), «Илемпи» (ача–пăча сăввисем, 1962), «Юмахсем» (1963), «Сăвăсем» (1963), «Çурхи кунсем» (ача–пăча сăввисем, 1964), «Телейлĕ туслăх» (сăвăсем, 1965), поэтăн вырăсла «Мои друзья» (сăвăсем, 1958), «Заветная мечта» (сăвăсем, 1960), «Братишки» (кĕске калавсем, 1963), «Наша улица» (сăвăсем, 1964), «Илья–батыр» (сăвăллă юмах, 1966).